27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
28
ВЫРСАРНИКУН
17(6768) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабӗн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем январӗн 24-мӗшӗнче каҫ пулса килнӗ тӗле Германии Силезири промышленность районӗн пысӑк центрне—**ГЛЕЙВИЦ** хулине, нимӗҫсем хӑйсен оборонин хӑватлӑ узелӗ тунӑскерне, штурмласа туртса илнӗ.

Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем Польшӑра **ХЖАНУВ** хулине—Домброво ҫӗркӑмрӑк басейнин пысӑк районӗсенчен пӗрне—ҫапӑҫса туртса илнӗ.

ГЛЕЙВИЦ хулипе **ХЖАНУВ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ГУСЕВ** генерал-полковникӑн, **АНИСИМОВ** генерал-лейтенантӑн, **КОРОВНИКОВ** генерал-лейтенантӑн, **КУРОЧКИН** генерал-полковникӑн, **БУХОВЕЦ** генерал-лейтенантӑн, **КОВАЛЬЧУК** генерал-майорӑн, **ГОНЧАРОВ** генерал-майорӑн, **НАУМОВ** генерал-майорӑн, **КАЗАЧЕК** генерал-майорӑн, **ТЕРТЫШНЫЙ** генерал-майорӑн, **ДОЛГОВ** полковникӑн, **ГРИНВАЛЬД-МУХО** полковникӑн, **РОМАШИН** полковникӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **КУЗНЕЦОВАН**, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн **ПОЛУБОЯРОВАН**, **ГЛАДНЕВ** полковникӑн, **БЕЛОУСОВ** подполковникӑн, **ТИМОФЕЕВ** полковникӑн, **СИЯНИН** полковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн **СЕМЕНОВАН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **ЯРОВОЙАН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **МИХАЛКИНАН**, артиллери генерал-майорӗн **ДОРОФЕЕВАН**, артиллери генерал-майорӗн **КАБАТЧИКОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **ВОЛКЕНШТЕЙНАН**, артиллери генерал-майорӗн **КОЛЕСНИКОВАН**, **КУЛИКОВ** полковникӑн, **ЧЕВОЛ** полковникӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **КРАСОВСКИН**, авиаци генерал-майорӗн **ПРОНИНАН**, авиаци генерал-майорӗн **ГОРЛАЧЕНКАН**, авиаци генерал-майорӗн **ПОЛБИНАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **РЯЗАНОВАН**, **МАЧИН** полковникӑн, **ДАВИДКОВ** полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн **АРХАНГЕЛЬСКИН** летчикӗсем; **ГРОМЦЕВ** полковникӑн, **БУЛАХОВ** полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **КОНЦЕВОЙАН** саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн **НЕСТЕРЕВАН**, **ШЕЛАМЫТОВ** полковникӑн, **СУХОВ** майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **ГЛЕЙВИЦ** хулипе **ХЖАНУВ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 25-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, **ГЛЕЙВИЦ** хулипе **ХЖАНУВ** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, **ГЛЕЙВИЦ** хулипе **ХЖАНУВ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТӐП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 25-мӗшӗ. № 253.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабӗн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, январӗн 25-мӗшӗнче, каҫ пулса килнӗ тӗле Польша ҫӗрӗнче **ОСТРУВ** хулине тата нимӗҫ Силезийӗнче **ЕЛЬС** хулине—чугун ҫулсен паха узелӗсемпе нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ пункчӗсене — туртса илнӗ.

ОСТРУВ хулипе **ЕЛЬС** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ГОРДОВ** генерал-полковникӑн, **КОРОТЕЕВ** генерал-полковникӑн, **ЛЮБАРСКИЙ** генерал-лейтенантӑн, **КОЛОМИНОВ** генерал-майорӑн, **ГЛУХОВ** генерал-лейтенантӑн, **МАРТИРОСЯН** генерал-майорӑн, **КОЛОБОВ** генерал-майорӑн, **РУБАН** полковникӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **ФОМИНЫХАН**, **МИРОНЕНКО** полковникӑн, **МИШЕНКО** полковникӑн, **РАФИКОВ** полковникӑн, **КУХАРЬ** подполковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн **ДЗЕВУЛЬСКИН**, артиллери генерал-майорӗн **ФАУСТОВАН** артиллерисчӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ГУСЕВАН**, **ГЛЕЗЕР** полковникӑн саперӗсем; **СИМХОВИЧ** полковникӑн, **ДОЛЕНКО** подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **ОСТРУВ** хулипе **ЕЛЬС** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 25-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, **ОСТРУВ** хулипе **ЕЛЬС** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, **ОСТРУВ** хулипе **ЕЛЬС** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТӐП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 25-мӗшӗ. № 254.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем паян, январӗн 26-мӗшӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссири **ТАПИАУ**, **АЛЛЕНБУРГ**, **НОРДЕНБУРГ** тата **ЛЕТЦЕН** хулисене—Хӗвелтухӑҫ Пруссин вӑтаҫӗрти районӗсене хӳтӗлеме нумай вӑхӑтлӑха тунӑ оборона тӑрӑхӗн питӗ вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене — ҫапӑҫса туртса илнӗ.

Малта асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ЛЮДНИКОВ** генерал-лейтенантӑн, **ШАФРАНОВ** генерал-лейтенантӑн, **СИМИНОВСКИЙ** генерал-майорӑн, **ЩЕДРИН** генерал-майорӑн, **ВЕЙКИН** генерал-майорӑн, **ОЛЕШЕВ** генерал-майорӑн, **БЕЗУГЛЫЙ** генерал-лейтенантӑн, **КЛЕШНИН** генерал-майорӑн, **ЗАВАДОВСКИЙ** генерал-лейтенантӑн, **КОШЕВОЙ** генерал-лейтенантӑн, **ПЕРЕКРЕСТОВ** генерал-майорӑн, **АРУШАНЯН** генерал-майорӑн, **КУШНАРЕНКО** генерал-майорӑн, **ЗАРЕЦКИЙ** полковникӑн, **ПАПЧЕНКО** генерал-майорӑн, **РУТЬКО** полковникӑн, **ЛЕВИН** полковникӑн, **СОБОЛЕВ** полковникӑн, **ПЕТЕРС** генерал-майорӑн, **ПРОНИН** генерал-майорӑн, **ЦУКАРЕВ** полковникӑн, **ДОНЕЦ** генерал-майорӑн, **САМОХВАЛОВ** генерал-майорӑн, **ПОЛЕЩУК** полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн **ДЕРЕШАН**, **ЧЕРКАСОВ** полковникӑн, **МАРГУЛИС** полковникӑн, **ИВАНОВ** подполковникӑн, **КОВАЛЬЧУК** подполковникӑн, **ТРОФИМОВ** майорӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн **БУТКОВАН**, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн **БУРДЕЙНЫЙАН**, **ЦИНЧЕНКО** полковникӑн, **ТИМЧЕНКО** полковникӑн, **ШМАКОВ** подполковникӑн, **КУПИН** полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн **ЗАХАРОВАН**, авиаци генерал-майорӗн **МОЛОКОВАН**, **ШИНКАРЕНКО** полковникӑн, **АНДРЕЕВ** полковникӑн, **ЗАКЛЕП** подполковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ГНЕДОВСКИН**, **ПАРХОМЧУК** полковникӑн, **ЗАЙЦЕВ** полковникӑн, **ВОРОНЦОВ** полковникӑн, **ШИЛО** полковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн **СОРОКИНАН**, **БЕЛЫШЕВ** полковникӑн, **МАРКОВ** подполковникӑн, **ГОРДИЕНКО** подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **ТАПИАУ**, **АЛЛЕНБУРГ**, **НОРДЕНБУРГ** тата **ЛЕТЦЕН** хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 26-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, Хӗвелтухӑҫ Пруссири малта асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТӐП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗ, № 255.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пырса, паян, январӗн 26-мӗшӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссири **МЮЛЬХАУЗЕН**, **МАРИЕНБУРГ** тата **ШТУМ** хулисене — нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене—туртса илнӗ те, Данциг бухтин ҫыранне татса тухса, **ТОЛЬКЕМИТ** хулине йышӑннӑ, ҫапла вара нимӗҫ ҫарӗсен Хӗвелтухӑҫ Пруссири группировкине Германин вӑтаҫӗрти районӗсенчен татса илнӗ.

Данциг бухтин ҫыранне татса тухассишӗн тата малта асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ГУСЕВ** генерал-лейтенантӑн, **ФЕДЮНИНСКИЙ** генерал-полковникӑн, **ГЛЕБОВ** генерал-лейтенантӑн, **КОКОРЕВ** генерал-лейтенантӑн, **КОЛГАНОВ** генерал-лейтенантӑн, **ФЕТИСОВ** генерал-майорӑн, **ПОЛЕНОВ** генерал-лейтенантӑн, **ПЕТКЕВИЧ** полковникӑн, **ЦЫПЛЕНКОВ** полковникӑн, **КАЗАКЕВИЧ** генерал-майорӑн, **ЧЕСНОКОВ** полковникӑн, **КОЛЧАНОВ** генерал-майорӑн, **РАДЫГИН** генерал-майорӑн, **БОРЩЕВ** генерал-майорӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн **ВОЛЬСКИН**, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **САХНОН**, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **МАЛАХОВАН**, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **КИСЕЛЕВАН**, **МИХАЙЛОВ** полковникӑн, **ЛОМАКО** полковникӑн, **МИРОНЕНКО** полковникӑн, **ГОРБЕНКО** полковникӑн, **ЮРЕВИЧ** полковникӑн, **ДОБИН** майорӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн **КАЗАКОВАН**, **КРИВОШЕЕНКО** полковникӑн, **ВОРОНИЧ** полковникӑн, **ГНИДИН** полковникӑн артиллерисчӗсем; **ЦВАНГЕР** полковникӑн, **БАБАЕВ** подполковникӑн саперӗсем; **БАХИЛИН** полковникӑн, **ЛИТОВЧЕНКО** майорӑн, **КОВТУН** подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, Данциг бухтин ҫыранне татса тухассишӗн тата **МЮЛЬХАУЗЕН**, **МАРИЕНБУРГ**, **ШТУМ** тата **ТОЛЬКЕМИТ** хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене **«МАРИЕНБУРГСКИ»** тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 26-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, Данциг бухтин ҫыранне татса тухнӑскерсене тата малта асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, Данциг бухтин ҫыранне татса тухассишӗн тата Хӗвелтухӑҫ Пруссири **МАРИЕНБУРГ** хулипе малта асӑннӑ ытти хуласене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТӐП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗ. № 256.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабӗн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем паян, январӗн 26-мӗшӗнче, нимӗҫ Силезийӗнчи промышленность районӗн пысӑк центрне **ГИНДЕНБУРГ** хулине—ҫул йӗрсен паха узелне тата нимӗҫсен оборонине хӑватлӑн тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ.

ГИНДЕНБУРГ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ГУСЕВ** генерал-полковникӑн, **АНИСИМОВ** генерал-лейтенантӑн, **БУХОВЕЦ** генерал-лейтенантӑн, **НАУМОВ** генерал-майорӑн, **НОВОСЕЛЬСКИЙ** генерал-лейтенантӑн, **ТРУБАЧЕВ** генерал-майорӑн, **ШОЛЕВ** генерал-майорӑн, **ЗАЙОНЧКОВСКИЙ** генерал-майорӑн, **КУЗНЕЦОВ** полковникӑн, **ПЕСОЧИН** полковникӑн, **ДОЛГОВ** полковникӑн ҫарӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн **КУЗНЕЦОВАН**, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн **СУХОВАН**, **ШПИЛЛЕР** полковникӑн, **ГЛАДНЕВ** полковникӑн, **ТИМОФЕЕВ** полковникӑн, **ТРАВКИН** полковникӑн, **БЕЛОУСОВ** подполковникӑн, **ТЫКВАЧ** подполковникӑн, **РОСЕКТАЕВ** подполковникӑн, **ЧЕШУК** подполковникӑн, **ЧЕРНЫХ** подполковникӑн, **БАРЫЛОВ** подполковникӑн, **ҪАЕНКО** подполковникӑн, **МЕЛЬНИКОВ** подполковникӑн, **ОЛЕЙНИКОВ** майорӗн танкисчӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн **МИХАЛКИНАН**, артиллери генерал-майорӗн **КОЛЕСНИКОВАН**, **БАГДАСАРЯН** полковникӑн, **ДЕГТЯРЬ** полковникӑн, **ЧЕВОЛ** полковникӑн, **ГОРДЕЕВ** полковникӑн, **УГРЮМОВ** подполковникӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **КРАСОВСКИН**, авиаци генерал-майорӗн **ПРОНИНАН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **РЯЗАНОВАН**, авиаци генерал-майорӗн **ПОЛБИНАН**, авиаци генерал-майорӗн **АРХАНГЕЛЬСКИН**, авиаци генерал-майорӗн **БАРАНЧУКАН**, **МАЧИН** полковникӑн, **ШУНДРИКОВ** подполковникӑн, **ЮЗЕЕВ** полковникӑн, **БЫСТРОВ** полковникӑн летчикӗсем; **ГРОМЦЕВ** полковникӑн, **КОРДЮКОВ** полковникӑн, **ШУБИН** полковникӑн саперӗсем; **ШЕЛАМЫТОВ** полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **ГИНДЕНБУРГ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 26-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, **ГИНДЕНБУРГ** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, **ГИНДЕНБУРГ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТӐВАТӐП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗ. № 257.

И. В. Сталин Англи парламенчӗн делегацине йышӑнни

Январӗн 25-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Англи парламанчӗн делегацине йышӑннӑ. Йышӑнура ҫаксем пулнӑ: Эллиот, Ч. Понсонби, М. Баллер, лорд Ловат, Д. Паркер, Т. Фрезер, лорд Фарингдон, У. Робертс, П. В. Джеусон, С. Кинг-Холл господинсем.

Йышӑнура СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ И. М. Майский, ҫавӑн пекех тата Великобританин Совет Союзӗнчи Ӗҫӗсен Повереннӑйӗ Бальфур господин пулнӑ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Ленинград хулине ЛЕНИН орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Ленинградри ӗҫҫыннисем хамӑр Тӑван ҫӗршывшӑн калама ҫук паха ӗҫсем тунӑшӑн тата Ленинграда тӑшман хупӑрласа тӑнӑ вӑхӑтра нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ хастарлӑн та паттӑррӑн кӗрешнӗшӗн, дисциплинӑллӑ та ҫирӗп пулнӑшӑн Ленинград хулине Ленин орденӗ парса наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1945 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗ.

Совет профсоюзӗсен делегацийӗ профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери конференцине тухса кайнӑ

Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцине Англие совет профсоюзӗсен делегацийӗ тухса кайнӑ. Делегацие ҫаксем кӗреҫҫӗ: В. В. Кузнецов (делегаци председателӗ), М. П. Тарасов, Е. Я. Сидоренко, Е. Г. Жульга, Л. В. Марков, Е. М. Савков, Е. В. Важенин, П. А. Борисов, В. С. Цветкова, А. А. Вешников, М. И. Кузнецов, Ю. А. Беляева, К. П. Алексеев, П. Д. Ефанов, Н. Н. Данилов, В. Я. Карягин, А. Д. Данилов, И. М. Шмарин, Д. М. Ахундов, А. А. Козлянинова, И. Д. Артюхин, Я. П. Путрыньш, Н. В. Гуртовой, В. В. Гусев, М. М. Фалин, С. В. Захаров, А. С. Малькова, К. М. Матвеев, В. Н. Березин, А. И. Рогова, А. Б. Потапов, А. А. Космодемьянский, Ю. Ф. Тельман, К. Ф. Сахарова, В. А. Антонов юлташсем.

Франци профсоюзӗсен делегацийӗ Мускавран тухса кайнӑ

Пӗтӗмӗшле Ӗҫ Конфедерацийӗн секретарӗ Бенуа Фрашон ертсе пыракан Франци профсоюзӗсен делегацийӗ Мускавран тухса кайнӑ.

Аэродромра делегацие ВЦСПС-па профсоюзсен Центральный Комитечӗсен ертсе пыракан работникӗсем ӑсатса янӑ. (ТАСС).

СССР-ти Наука академийӗ 220 ҫул тултарать

СССР-ти Наука академийӗ 220 ҫул тултарнӑ ятпа СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ юбилее ирттерме ятарласа комитет тунӑ. Юбилей комитетне Академи президенчӗ В. Л. Комаров ертсе пырать. Комитета ҫаксем кӗреҫҫӗ: А. А. Байков, В. П. Волгин, Н. Д. Зелинский, Л. А. Орбели (председатель заместителӗсем), Н. Г. Бруевич (ответлӑ секретарь), А. И. Абрикосов, В. М. Алексеев, И. П. Бардин, А. Н. Бах, С. Н. Бернштейн, А. А. Богомолец, Н. Н. Бурденко, С. И. Вавилов, Е. С. Варга, В. А. Веснин, Б. Е. Веденеев, И. М. Виноградов, Н. А. Вознесенский, А. Я. Вышинский, Н. Ф. Гамалея, Б. Д. Греков, С. А. Зернов, А. Ф. Иоффе, П. Л. Капица, С. В. Кафтанов, И. Ю. Крачковский, А. Н. Крылов, Т. Д. Лысенко, И. И. Мещанинов, Н. А. Морозов, Н. И. Мусхелишвили, А. Н. Несмеянов, В. А. Обручев, И. А. Орбели, В. П. Потемкин, Л. И. Прасолов, Д. М. Прянишников, Н. Н. Семенов, А. Н. Толстой, А. Е. Фаворский, А. Е. Ферсман, Е. А. Чудаков.

Комитета Академи 220 ҫул тултарнине уявласа ирттерме хушнӑ. СССР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, юбилей 1945 ҫулхи май уйӑхӗнче пулса иртмелле. (ТАСС).

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ январӗн 25-мӗшӗнче Мексикӑра, авиаци катастрофи пулнипе, СССР-ӑн Мексикӑри Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ Константин Александрович Уманский вилни ҫинчен кулянса пӗлтерет.

СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗ январӗн 25-мӗшӗнче Мексикӑра, авиаци катастрофи пулнипе, СССР-ӑн Мексикӑри Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ Константин Александрович Уманский вӑхӑтсӑр вилни ҫинчен кулянса пӗлтерет.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА
Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующине
Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕшпе 3-мĕш фронтсен çарĕсем тăшманăн МАЗУР КӲЛЛИСЕН районĕнчи хăватлă, нумай вăхăтлăха тунă, шалалла инçете каякан оборонине пĕтĕмĕшпех татнă та (нимĕçсем çав оборонăна пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнчен пуçласах никам çĕнтерейми оборона системи тесе шутласа тăнă) БАРТЕН, ДРЕНГФУРТ, РАСТЕНБУРГ, РАЙН, НИКОЛАЙКЕН, РУДШАННИ, ПУППЕН, БАБИНТЕН, ТЕЕРВИШ хулисене—нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ.

Нимĕçсен МАЗУР КӲЛЛИСЕН районĕнчи оборонине татассишĕн тата малта асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ШАФРАНОВ генерал-лейтенантăн, БОЛДИН генерал-полковникăн, ЩЕДРИН генерал-майорăн, ОЗЕРОВ генерал-лейтенантăн, КНЯЗЬКОВ генерал-майорăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, КЛЕШНИН генерал-майорăн, ЛЮХТИКОВ генерал-майорăн, МУЛЬТАН генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, БЕРЕСТОВ генерал-майорăн, ПОЛЯКОВ полковникăн, ХАУСТОВИЧ полковникăн, ДЕМИН полковникăн, ЛОБАНОВ полковникăн, ЛЕВИН полковникăн, АРДАНОВСКИЙ полковникăн, РУТЬКО полковникăн, ЗОЛОТАРЕВ полковникăн, СОБОЛЕВ полковникăн, САБЕНКО полковникăн, БИРСТЕЙН полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, ТАРАСОВ полковникăн, КОЗАК полковникăн, ДАЛМАТОВ генерал-майорăн, ПЕРЕВОЗНИКОВ полковникăн, КРОНИК генерал-майорăн, ИГНАТЬЕВ генерал-майорăн, ДМИТРИЕВ генерал-майорăн, ГАЙФУТДИНОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн СЕМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ВАСИЛЬЕВĂН, ФЕДОТОВ полковникăн, ЛАВРЕНТЬЕВ полковникăн, ДИДЕНКО полковникăн, ДМИТРУК подполковникăн, ТУРЧАНИНОВ полковникăн, ЕРМАКОВ майорăн, СТЕПАНОВ полковникăн артиллерисчĕсем; ЛУКАШЕВ полковникăн БОНДАРЕНКО полковникăн, МОРЕВ полковникăн, БЗИРИН подполковникăн, ХУХРИН подполковникăн, КУПИН подполковникăн, ШМЫРОВ полковникăн, МЯЧЕВ полковникăн, КАЗАКЕВИЧ майорăн танкисчĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн МЕЛЬНИКОВĂН, ЛОГИНОВ полковникăн, ЗАЙЦЕВ полковникăн, ВОРОНЦОВ полковникăн саперĕсем; БЕЛЫШЕВ полковникăн, МАРКОВ подполковникăн, ТЕЙКОВЦЕВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен МАЗУР КӲЛЛИСЕН районĕнчи оборонине татассишĕн тата БАРТЕН, ДРЕНГФУРТ, РАСТЕНБУРГ, РАЙН, НИКОЛАЙКЕН, РУДШАННИ, ПУППЕН, БАБИНТЕН тата ТЕЕРВИШ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «МАЗУРСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 27-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕшпе 3-мĕш фронтсен паттăр çарĕсене, нимĕçсен МАЗУР КӲЛЛИСЕН районĕнчи нумай вăхăтлăха тунă оборонине татнăскерсене тата малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, нимĕçсен МАЗУР КӲЛЛИСЕН районĕнчи оборонине татассишĕн тата Хĕвелтухăç Пруссири малта асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 27-мĕшĕ. № 258.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, паян, январĕн 27-мĕшĕнче, СОСНОВЕЦ, БЕНДЗИН, ДОМБРОВА ГУРНЕ, ЧЕЛЯДЗЬ тата МЫСЛОВИЦЕ хулисене—ДОМБРОВА çĕркăмрăк районĕн пысăк центрĕсене—туртса илнĕ.

Малта асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: КОРОВНИКОВ генерал-лейтенантăн, ГУСЕВ генерал-полковникăн, АНИСИМОВ генерал-лейтенантăн, КОВАЛЬЧУК генерал-майорăн, БУХОВЕЦ генерал-лейтенантăн, АНДРЕЕВ генерал-майорăн, КОЗАЧЕК генерал-майорăн, НОВОСЕЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, КУЗЬМИН полковникăн, АЛЕКСАНДРОВ генерал-майорăн, ГРИШИН генерал-майорăн, РОДИОНОВ генерал-майорăн, ЕФИМЕНКО полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, ПЕСОЧИН полковникăн, СУХАРЕВ полковникăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВĂН, ДУШАК полковникăн, КУРКОТКИН подполковникăн, СКИДАНОВ полковникăн, ЛЕОНОВ полковникăн, ИЩЕНКО подполковникăн, СИМЧЕНКО подполковникăн, ГОРБАТЕНКО подполковникăн, ЧИСТЯКОВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ЛЕВИКОВ майорăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ДОРОФЕЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКЕНШТЕЙНĂН, ДОЛГИХ полковникăн, БУРОВ полковникăн, ДЕГТЯРЬ полковникăн, РУСАНОВ полковникăн, КУПИН полковникăн, ЛЫСЕНКО полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн ПОЛБИНĂН, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, МАЧИН полковникăн летчикĕсем; БУЛАХОВ полковникăн, КОСТЕНКО полковникăн, БЕЛЬЧЕНКО подполковникăн саперĕсем; МАКАРОВ подполковникăн, СУХОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, СОСНОВЕЦ, БЕНДЗИН, ДОМБРОВА ГУРНЕ, ЧЕЛЯДЗЬ тата МЫСЛОВИЦЕ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ДОМБРОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 27-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, Домброва çĕркăмрăк районĕнчи малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, малта асăннă хуласене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 27-мĕшĕ. № 259.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсен командующине
Арми генералне ПЕТРОВА
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта КОРЖЕНЕВИЧА

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, Карпат тăрăхĕнчи сăртлă-вăрманлă йывăр вырăнсенче малалла наступлени туса пырса, паян январĕн 27-мĕшĕнче, ВАДОВИЦЕ, СПИШСКА НОВА ВЕС, СПИШСКА СТАРА ВЕС, ЛЕВОЧА хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене çапăçса туртса илнĕ.

Асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: МОСКАЛЕНКО генерал-полковникăн, ВОРОБЬЕВ генерал-лейтенантăн, ГАСТИЛОВИЧ генерал-лейтенантăн, БРИЛЕВ генерал-майорăн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантăн, ШМЫГО генерал-майорăн, ГУСЕВ генерал-майорăн, КИСЕЛЕВ генерал-майорăн, ВАСИЛЕВСКИЙ генерал-майорăн, БУШТРУК полковникăн, ИВАНОВСКИЙ генерал-майорăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, БЕЖКО генерал-майорăн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорăн, МЕДВЕДЕВ генерал-лейтенантăн, бригада генералĕн СВОБОДĂН, ПРОХОРОВ генерал-майорăн, ДУДАРЕВ генерал-майорăн, УГРЮМОВ полковникăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, ФАДЕЕВ генерал-майорăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, БЛЮМИН подполковникăн, бригада генералĕн БОЧЕКĂН, бригада генералĕн КЛАПАЛЕКĂН çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРИОФИЛЛИН, ЧЕНГЕРЫ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, ШЕВЧЕНКО полковникăн, КАРТАШЕВ подполковникăн, ЦИВЧИНСКИЙ полковникăн, НИКИТИН полковникăн, ЗАИКИН подполковникăн, ПЛАХУНОВ подполковникăн, ОРЛЯНСКИЙ подполковникăн, ХАЧАТУРЯН майорăн, МИРОНОВ полковникăн, ЯКОВЛЕВ полковникăн, САВИЦКИЙ полковникăн, ЗИЛЬДЕРБЕРГ полковникăн, СИЛАЕВ полковникăн, КОЗЯКОВ полковникăн, КУЛЕШОВ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ШИРОБОКОВĂН, СЕРОВ полковникăн, АЛЕКСАНДРОВ полковникăн, ПИСАРИХИН полковникăн, ХОПКО полковникăн, ГАЕВ полковникăн, танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ИЗОТОВĂН, ОБУХОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн ЛАКЕЕВĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВĂН, ЖУРИН полковникăн, ВОЛОДИН полковникăн, КЛЮЧНИКОВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАТВЕЕВĂН, ТАРУНИН полковникăн, НЕКРАСОВ полковникăн, КОРОТКИЙ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВАДОВИЦЕ, СПИШСКА НОВА ВЕС, СПИШСКА СТАРА ВЕС тата ЛЕВОЧЕ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 27-мĕшĕнче, 23 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, вăл шутра Чехословакин бригада генералĕ СВОБОДА ертсе пыракан корпусне те, çӳлерех асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, асăннă хуласене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 27-мĕшĕ. № 260.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем январĕн 26-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Пруссири ТАПИАУ, АЛЛЕНБУРГ, НОРДЕНБУРГ тата ЛЕТЦЕН хулисене—Хĕвелтухăç Пруссин вăтаçĕрти районĕсене хӳтĕлемешкĕн нумай вăхăтлăха тунă оборона тăрăхĕн хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ. çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 250 пункта ытла йышăннă. вăл шутра—ЛАБЛАККЕН, ГРОСС ДРООЗДЕН, БОТЕНЕН, БРАСДОРФ, ЛЕВЕНХАГЕН, УДЕРВАНГЕН, ФРИШИНГ, ГРОСС-ВОБРОСТ ятлă пысăк ялсем тата ПРОНИТТЕН, ВИЛЛКЮНЕН, ГЕОРГЕНФЕЛЬДЕ чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, январĕн 26-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Пруссири МЮЛЬХАУЗЕН, МАРИЕНБУРГ тата ШТУМ хулисене — нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—туртса илнĕ те. Данциг бухти хĕррине татса тухса, ТОЛЬКЕМИТ хулине йышăннă, çапла вара пирĕн çарсем нимĕç çарĕсен Хĕвелтухăç Пруссири группировкине Германин вăтаçĕрти районĕнчен татса уйăрнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем Польша çĕрĕнче ЛАСИН, УНИСЛАВ, ХЕЛМЖА (КУЛЬМЗЕЕ) хулисене тата халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла туртса илнĕ. вăл шутра—ГРУТТА, РЕДЕН, АЙЗЕЛАУ, БРОСОВО, ШАРЛЗЕЕ, РЕНТШКАУ, ВАЛЬДАУ (ТОРН хулинчен 4 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), РОЗЕНБЕРГ ятлă пысăк ялсем.

ПОЗНАНЬ хули енче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, ВОНГРОВЕЦ, РОГАЗЕН, ШОККЕН, ВАЙССЕНБУРГ, КУРНИК, МОСИНА, САНТМИШЕЛЬ хулисене тата халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла туртса илнĕ.

ПОЗНАНЬ хули районĕнчи виçĕ аэродром çинче тата авиаци заводĕнче фронт çарĕсем нимĕçсен 292 самолетне тытса илнĕ.

КАЛИШ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем шоссе çулĕсен пысăк узелĕ пулса тăракан КРОТОШИН хулине, КОМШИН хулине, ЗДУНЫ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата Польша çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем январĕн 26-мĕшĕнче нимĕç Силезийĕнчи промышленность районĕн пысăк центрне ГИНДЕНБУРГ хулине—çулсен паха узелĕ тата нимĕçсен оборонин питĕ вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăраканскерне, штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата Германи çĕрĕнче ГЕРНШТАДТ, ВИНЦИГ, ШТРОППЕН, ПРАУСНИТЦ, ТРЕБНИТЦ, ЮЛИУСЬУРГ хулисене тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла çапăçса йышăннă.

ЕЛЬС хули районĕнчи аэродромсенче фронт çарĕсем нимĕçсен 150 самолетне тытса илнĕ.

КОШИЦЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, Чехословаки çĕрĕнче СПИШСКЕ ПОДГРАДЬЕ хулине ШПИШСКЕ ВЛАХИ хулине туртса илнĕ. çавăн пекех тата ЛЕХНИЦА, РИХВАЛЬД, ТОПОРЕЦ, БЛАЖОВ, ГОРИСКИ, МАРКУШОВЦЕ, ВАНДРИШЕЛЬ, ВЛАХОВО ялĕсене йышăннă.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДĂРА) хупăрласа илнĕ тăшман чăсĕсене пĕтерессишĕн çапăçнă, 25 квартал туртса илнĕ.

БУДАПЕШТРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 97 танкне çĕмĕрсе тăкнă, вĕсенчен 47 танкне Будапештран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 15 самолетне персе ӳкернĕ.

Белоруссири 3-мĕш, 2-мĕш, 1-мĕш фронтсен тата Украинăри 1-мĕшпе 4-мĕш фронтсен çарĕсем 1945 çулхи январĕн 12-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшман тӳснĕ çухатусем тата пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейсем

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, арми генералĕ ЧЕРНЯХОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе январĕн 14-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 183, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—700 ытла, тупăсем—710, минометсем—480, пулеметсем—1.940, автомашинăсем—2.500, тракторсемпе тягачсем—270. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 60.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—30, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—88, тупăсем—379, минометсем—222, пулеметсем—2.532, винтовкăсемпе автоматсем—8.500, ывăтмалли аппаратсем—99, радиостанцисем—11, автомашинăсем—522, велосипедсем—2.478, боеприпас, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—73.

4.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла вара, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем 11 кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—64.000 çын ытла, самолетсем—213, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—798, тупăсем—1.089, минометсем—702, пулеметсем—4.472, автомашинăсем—3.022.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Совет Союзĕн Маршалĕ РОКОССОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, январĕн 12-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 38, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—490, тупăсем—830, минометсем—470, пулеметсем—1.830, автомашинăсем—1.800, бронетранспортерсем—44. Тăшманăн вилнисене кăна шутласан та, 65.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—72, тупăсем—633, минометсем—214, пулеметсем—1.042, винтовкăсемпе автоматсем — 10.000 ытла, бронетранспортерсем—37, автомашинăсем—729, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—347, лашасем—246, тягачсем—66, паровозсем—38, вагонсем—1.800, боеприпас, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—161.

5.530 нимĕç салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла вара, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем 11 кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—70.000 çын ытла, самолетсем—38, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—562, тупăсем—1.463, минометсем—684, пулеметсем—2.872, автомашинăсем—2.529.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, Совет Союзĕн Маршалĕ ЖУКОВ командир пулса ертсе пынипе, январĕн 14-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 123, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 400 ытла, тупăсем—700 ытла, минометсем—950, пулеметсем—2.900, бронетранспортерсем—320, автомашинăсем—5.500. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 80.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—120, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—350, тупăсем—1.452, минометсем—1.300, пулеметсем—8.000, винтовкăсемпе автоматсем—35.000 ытла, бронетранспортерсем—51, автомашинăсем — 679, тракторсемпе тягачсем—388, паровозсем—134, вагонсем—2.773, хĕçпăшал, боеприпас тата ытти çар пурлăхĕ тиенĕ чугун çул эшелонĕсем—29, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—10.400, лашасем—8.000 ытла, боеприпас, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—229.

37.700 нимĕç салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла вара, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 11 кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—117.700 çын, самолетсем—243, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—750, тупăсем—2.152, минометсем—2.250, пулеметсем—10.900, бронетранспортерсем—381, автомашинăсем—6.179.

* * *

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, Совет Союзĕн Маршалĕ КОНЕВ командир пулса ертсе пынипе, январĕн 12-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 98, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 480, тупăсем—950, минометсем—860, пулеметсем—2.100, автомашинăсем — 15.000 ытла. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 70.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 307, тупăсем—1.596, минометсем — 2.560, пулеметсем—4.000, автомашинăсем—6.750, паровозсем—22, чугун çул вагонĕсем — 1.200.

31.900 нимĕç салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла вара, УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 13 кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—101.900 çын, самолетсем—98, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—787, тупăсем—2.546, минометсем—3.420, пулеметсем—6.100, автомашинăсем—21.750.

* * *

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, арми генералĕ ПЕТРОВ командир пулса ертсе пынипе, январĕн 15-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—68, тупăсем — 300, минометсем—200, пулеметсем—800, бронетранспортерсем—30, автомашинăсем—160. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 20.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 40, тупăсем—382, минометсем—130, пулеметсем—875, бронетранспортерсем—44, автомашинăсем—379, вăрçă хатĕрĕсемпе çар пурлăхĕ тиенĕ лавсем—747, лашасем — 2.333, паровозсем—13, вагонсем—510, боеприпас, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—115.

7.200 нимĕç салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла вара, УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем 10 кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çыннисене çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—27.000 çын ытла, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—108, тупăсем — 682, минометсем—330, пулеметсем—1.675, автомашинăсем—907.

* * *

Çапла ĕнтĕ, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш фронтсен тата УКРАИНĂРИ 1-мĕшпе 4-мĕш фронтсен çарĕсем январĕн 12-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çынсем тĕлĕшĕнчен çакăн чухлĕ çухату тӳстернĕ:

ПЕТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 442, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—2.138, тупăсем—3.490, минометсем—2.960, пулеметсем—9.570, автомашинăсем—24.950. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 295.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—150, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—857, тупăсем—4.442, минометсем—4.426, пулеметсем—16.449, автомашинăсем—9.059.

86.330 нимĕç салтакĕпе офицерне ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

Çапла вара, пилĕк фронт çарĕсем наступлени туса пынă вăхăт хушшинче тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çыннисене пĕтĕмпе çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна лекнисемпе вилнисем—380.000 çын ытла, самолетсем—592, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—2.995, тупăсем—7.332, минометсем—7.386, пулеметсем—26.019, автомашинăсем—34.019.

СОВИНФОРМБЮРО.

Венгрин перемири тума килнĕ делегацийĕ Мускавран кайни

Венгри Халăхĕн Вăхăтлăх Правительствин Мускава перемири тума килнĕ делегацийĕ Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсемпе перемири тăвасси çинчен калаçса татăлса, çав Килĕшĕве алă пуснă хыççăн, январĕн 25-мĕшĕнче, Мускавран тухса кайнă. Делегацире çаксем тăраççĕ: Венгри Халăхĕн Вăхăтлăх Правительствин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Дьендеши Янош господин, Оборона Министрĕ генерал-полковник Вереш Янош тата Министрсен Кабинечĕн Статс-секретарĕ Балог Иштван господин.

Киев вокзалĕнче делегацие çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăну ĕçĕсен Отделĕн Начальникĕ генерал-майор М. П. Кутузов тата Наркоминделăн Протокол отделĕн Заведующийĕн заместителĕ Г. И. Фомин.

Финн сеймĕнче панă ыйту

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 25-мĕшĕ (ТАСС). «Вапаа Сана» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ултăшĕн ушкăнĕ Финн сеймне çакăн пек ыйту янă: 1941 çулта президент пулнă çын тата 1939-мĕшпе 1941-мĕш çулсенче правительство членĕсем пулнă çынсем е тата çав çулсенче государствăра ответлă вырăнсенче ĕçлене çынсем ыттисем те вăрçă пуçланнăшăн айăплă пулнине палăртас тĕлĕшпе тата айăпĕсем палăрсан, вĕсене ответ тыттарас тĕлĕшпе правительство мĕн те пулин тума шутлать-и?—тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—07, заместительне секретарен — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00266 Типог... № 1, ... полиграфра ... при СНК ...Р. Заказ № 2, ф. б. 59×42 ... Тираж 10.000 экз.